Муркаш округӗн территори пайӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ

# Юнкӑ территори пайӗ

## *Канаш, Коминтерн, Пӗрремӗш Май выҫҫӑлккисем, Юнкӑ, Елкино, Кӑпас, Ҫармӑҫкасси, Юнкӑпуҫ ялӗсем*

# «Пуҫаруллисене патшалӑх пулӑшать»



Юнкӑра ача-пӑча площадки турӗҫ.



Ҫармӑҫкассинче шыв башни лартрӗҫ.



Канаш выҫҫӑлккинче пурӑнакансен ыйтӑвне те тивӗҫтерчӗҫ.

*Ҫапла каларӗ Муркаш муниципалитет округӗн Юнкӑ территори пайӗн ертӳҫи Сергей Самуков. Унччен Шупашкар хулинче ӗҫлесе пурӑннӑ Сергей Юрьевич иртнӗ ҫулхи майӑн 30-мӗшӗнче ҫӗнӗ ӗҫе кӳлӗнчӗ, тӑван тӑрӑха таврӑнчӗ.*

**– Сергей Юрьевич, хулари хӑтлӑ пурнӑҫ условийӗнчен уйрӑлма йывӑр пулмарӗ-и, мӗн савӑрса килчӗ-ха сире Юнкӑ тӑрӑхне?**

– Эпӗ – ял ҫынни, ҫак тӑрӑхра ҫуралса ӳснӗ, ачалӑхпа ҫамрӑклӑх ялта ӗҫлесе иртнӗ. Юнкӑ тӑрӑхӗ – манӑн пӗчӗк Тӑван ҫӗршыв, ҫавӑнпа та эпӗ тӑван ҫӗре таврӑннишӗн тата тӑван еншӗн тӑрӑшма май килнишӗн кӑмӑллӑ.

Эпӗ ӗҫличченхи ертӳҫӗсем пуҫланӑ ӗҫе малалла тӑсас килет, пирӗн тӑрӑхра мӗн авалтанах ӗҫчен те пуҫарулла ҫынсем пурӑннӑ. Яла пӗтме памалла мар, ял пурнӑҫӗ ан сӳнтӗр, ял ҫыннин пурнӑҫне хӑтлӑрах тӑвас килет, кил-ҫуртсем ан хупӑнччӑр тесе тӑрӑшатпӑр. Эпӗ хам та атте-анне, асатте-асанне ӗҫӗсене малалла тӑсатӑп, вӗсем мана яланах тӗрӗс ӗҫлеме тата пурӑнма вӗрентнӗ.

**– Юнкӑ енче пуҫарулла ҫынсем пурӑнаҫҫӗ тенӗрен. Республикӑра пуҫарулӑх бюджечӗн программипе пирӗн районта малтан икӗ ял тӑрӑхӗ ӗҫлеме пуҫларӗ, вӑл шутра малти ретре Юнкӑ ял тӑрӑхӗ те пулчӗ.**

– Паллах, ун чухне эпӗ Юнкӑра ӗҫлемен. Ҫапах та малтан ӗҫленисене ырӑпа асӑнас килет. Вӑл вӑхӑтра тунӑ спортпа сывлӑх сиплевӗн нумай функциллӗ площадки вырӑнти ҫынсемшӗн, уйрӑмах ача-пӑчапа ҫамрӑксемшӗн, питӗ вырӑнлӑ объект. Смета хакӗ 1 млн та 638 пин тенкӗпе танлашнӑ, 985 пин тенкӗ е 60 процентне республика бюджечӗнчен уйӑрса панӑ, ял тӑрӑхӗн бюджетӗнчен 327 пин тенкӗ, ҫавӑн чухлех вырӑнти ҫынсенчен тата предприятисенчен пухнӑ. Вӑл вӑхӑтрипе танлаштарсан, уйрӑмлӑхӗ пур, ял ҫыннисенчен халӗ ҫак программа валли унченхи пек 20 процент мар, унӑн ҫуррине пухаҫҫӗ.

**– Ырӑ пуҫару сирӗн территоринче ҫулсерен аталанса пыни курӑнать. Иртнӗ ҫул территоринче мӗнле объектсем ҫӗнетрӗр?**

– Ҫапла, юнкӑсем ку енӗпе кашни ҫулах япӑх мар ӗҫленӗ. Иртнӗ ҫул Кӑпас ялӗнчи Школьная, Ҫӗнтерӳ, Запрудная урамсенчи шыв сыхӑнӑвӗн сетьне юсаса ҫӗнетме май килчӗ. Проект хакӗ 3 млн та 822 пин те 513 тенкӗпе танлашрӗ. Республика бюджечӗнчен 2 млн та 293 пин те 507 тенкӗ уйӑрчӗҫ. Вырӑнти бюджетран – 1 млн та 146 пин те 754 тенкӗ, ял ҫыннисенчен 382 пин те 252 тенкӗ пухнӑ. Ӗҫ подрядчикӗ – «Техэнергокомплект» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество.

Тепӗр объект та ҫакӑн йышшиех пулнӑ. Ҫармӑҫкассинчи шыв пӑрӑхӗн сыхӑнӑвӗн сетьне юсассин проекчӗн хакӗ татах та пысӑкрах, 8 млн та 292 пин те 372 тенкӗ. Республика бюджечӗнчен 4 млн та 975 пин те 423 тенкӗ уйӑрчӗҫ. Вырӑнти бюджетран – 2 млн та 452 пин те 911 тенкӗ, ял ҫыннисенчен 864 пин те 38 тенкӗ пухнӑ. Объект подрядчикӗ – «Альянс Групп» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество.

Тепӗр объект вӑл – Кӑпасри Запрудная тата Ҫӗнтерӳ урамсенчи ҫула юсасси пулчӗ, проект хакӗ 800 пин тенкӗ ытла. Подрядчикӗ «Гудвилл» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество пулчӗ.

**– Кӑҫал вара юнкӑсем пуҫарулӑх бюджечӗн мелӗпе еплерех ӗҫлесшӗн?**

– Ку енӗпе пирӗн кӑҫал та объектсем пур. Канаш выҫҫӑлккинче пушар хӑрушсӑрлӑхӗ валли шыв илмелли вырӑн тумалла. Проект хакӗ 811 пин те 506 тенкӗ. Республика бюджетӗнчен – 60 процент, 486 пин те 903 тенкӗ, вырӑнти бюджетран – 30 процент, 243 пин те 451 тенкӗ, ытти пайӗ – ял ҫыннисенчен – 10 процент, 81 пин те 150 тенкӗ.

Юнкӑпуҫӗнчи Дружба, Янтуш, Ягодная урамсенчи ҫула юсамалла. Проект хакӗ пӗчӗк мар, 4 млн та 582 пин те 900 тенкӗ. Республика бюджетӗнчен – 2 млн та 749 пин те 740 тенкӗ, вырӑнти бюджетран – 1 млн та 318 пин те 160 тенкӗ, ял ҫыннисенчен – 505 пин тенкӗ.

Юнкӑ ялӗнчи Яргунекки урамӗнче вара кӑҫал пирӗн пушар хӑрушсӑрлӑхӗн резервуарне вырнаҫтармалла тата спорт площадки тумалла. Ҫак ӗҫсен хакӗ 599 пин те 347 тенкӗ. Республика бюджетӗнчен – 359 пин те 608 тенкӗ, вырӑнти бюджетран – 159 пин те 738 тенкӗ, ял ҫыннисенчен – 43 пин тенкӗ.

**– Ытти укҫа-тенкӗпе усӑ курса иртнӗ ҫул тата мӗнле ӗҫсем туса ирттертӗр-ха?**

– Округ бюджечӗпе усӑ курса Пӗрремӗш Май выҫҫӑлккинче пӗве дамбине 72 пин тенкӗлӗх юсарӑмӑр. Подрядчикӗ Андрей Матросов предприниматель пулчӗ. Ҫак ялтах округ бюджечӗпе усӑ курса шыв башнин насусне 54 пин те 514 тенкӗлӗх улӑштартӑмӑр. Округ бюджетӗнчен уйӑрнӑ 20 пин тенкӗпе усӑ курса ытти шыв башнисемпе оборудование юсарӑмӑр. Сергей Шадрин предприниматель ял урамӗсенчи ҫутӑпа тивӗҫтерессипе 150 пин тенкӗлӗх ӗҫ турӗ.

**– Пуҫарулӑх бюджечӗн программисӗр пуҫне территоринче ҫитес вӑхӑтра мӗнле ӗҫсем тӑвасшӑн?**

– Ҫул-йӗр фончӗн укҫи-тенкипе е пуҫарулӑх бюджечӗн программине хутшӑнса Юнкӑ ялӗнчи ҫӑва патне каймалли 1 километра яхӑн ҫула юсас ыйту тӑрать. Ҫармӑҫкассинче пирс ҫаврӑмӗ тумалла. Юнкӑри Яргунекки урамӗнче чрезвычайлӑ лару-тӑрӑва систерекен система лартмалла. Ҫул-йӗр фончӗн укҫипе усӑ курса Юнкӑ ялӗнчи Зеленая урамри 800 метр ҫула юсамалла.

**– Наци проекчӗ Юнкӑ тӑрӑхне те ҫитни курӑнать.**

– Наци проекчӗн ырӑ ӗҫне юнкӑсем те туйма пултарчӗҫ. 2021 ҫулта пирӗн территоринчи Пӗрремӗш Май выҫҫӑлккинче «Сывлӑх сыхлавӗ» наци проекчӗ шайӗнче Чӑваш Енри сывлӑх сыхлавӗн пуҫламӑш сыпӑкне модернизацилессин программи пулӑшнипе ҫӗнӗ ФАП хута кайрӗ. Ун хыҫҫӑнхи ҫулта Юнкӑри врач офисӗнче юсав ӗҫӗсем туса ирттерчӗҫ. Ҫакӑнпа ҫынсем питӗ кӑмӑллӑ пулчӗҫ. Ҫавӑн пекех Кӑпасра та кӑҫал ФАП юсаса ҫӗнетме палӑртнӑ.

**– «Модернизация и развитие сферы жилищно-коммунального хозяйства» патшалӑх программипе те сирӗн тӑрӑхра объектсем ҫӗнелчӗҫ, кӑҫал та ку программа шайӗнче ӗҫсем пулӗҫ-и?**

– 2022 ҫулта муниципалитет харпӑрлӑхӗнчи капиталлӑ юсав ирттермелли шыв башнисемпе скважинӑсен республикӑри конкурс комиссийӗ Юнкӑ тӑрӑхӗнчи виҫӗ объекта ырласа йышӑннӑ. Вӗсем ыттисенчен пысӑкрах балл пухнӑ. Ку, паллах, питӗ кӑмӑллӑ. Кӑпасри шыв башнине юсама 1 млн та 100 пин тенкӗ уйӑрнӑ. Юнкӑпуҫӗнчи шыв башнине юсасси те ҫав хаках ларнӑ. Юнкӑри шывпа тивӗҫтермелли системӑн шыв усламалли сыхӑнӑвне юсама вара 2 млн та 700 пин тенкӗ уйӑрнӑ. Ҫак ӗҫсене хута яни Юнкӑ тӑрӑхӗшӗн питӗ лайӑх пулчӗ.



Иртнӗ ҫул Канаш выҫҫӑлккинче, Ҫармӑҫкассинче пурӑнакансене ӗҫмелли паха шывпа тивӗҫтертӗмӗр. Ҫармӑҫкассинче шыв башнине скважинӑн капиталлӑ юсавӗ 3 млн та 142 пин те 469 тенкӗпе танлашрӗ. Канаш выҫҫӑлккинчи ҫакӑн йышши объект юсавӗн хакӗ те ҫавнах майлах пулчӗ. Ҫак ӗҫсен подрядчикӗ – Павел Колесников предприниматель.

Асӑннӑ программӑна хутшӑнма халӗ Пӗрремӗш Май выҫҫӑлкки ялӗпе документсем хатӗрлес ӗҫ пырать.

**– Ырӑ сӑмах калани вара нихӑҫан та ытлашши мар. Тен территоринчи ӗҫсене тума хутшӑнакан пуҫарулла та тӑрӑшулла ҫынсен ячӗсене асӑнса хӑваратӑр?**

– Хастар ҫынсем кашни ялтах пур. Вӗсем ҫаксем: Николай Маряшкин, Эллина Иштудова, Луиза Аргандеева, Людмила Кудряшова, Александр Яндимиркин, Павел Краснов, Елена Ершова, Людмила Афанасьева, Светлана Ершова, Вера Черняк, Александр Никольский, Светлана Михалкина, Марина Карпова. Тавах вӗсене ҫапла хастар ӗҫлесе пынишӗн, малашне те активлӑхӗ ан чактӑр.

**Елена Ершова, Юнкӑпуҫ ялӗн старости:**

– Мана староста ӗҫне 2020 ҫулта шанса пачӗҫ. Хушнӑ ӗҫе йӗркеллӗ пурнӑҫлама тӑрӑшатӑп. Пирӗн ял ҫыннисем туслӑ, пӗрле килӗштерсе ӗҫлеҫҫӗ. Юнкӑ территорийӗнче, вӑл шутра Юнкӑпуҫӗнче те, курӑмлӑ ӗҫсем пулса пыраҫҫӗ, ку питӗ лайӑх. 2022 ҫулта шыв бышнине юсаса ҫӗнетрӗҫ. 2021 ҫулта пирӗн ялти Солнечная урамри ҫула юсарӗҫ.

Кӑҫал пуҫарулӑх бюджечӗн программипе усӑ курса Юнкӑпуҫӗнчи Дружба, Янтуш, Ягодная урамсенчи ҫулсене юсама палӑртнӑ. Ҫак ӗҫсем валли ял ҫыннисенчен укҫа пуҫтарма мана шанчӗҫ, ҫынсем ӑнланаҫҫӗ, хирӗҫлемеҫҫӗ. Ҫак ҫулсене юсасан вара питӗ лайӑх пулмалла.

Пӗрле тумалли ӗҫсем тупӑнсах тӑраҫҫӗ, ҫулла пулсан ҫынсемпе тухса ял урамӗсене тирпейлетпӗр, ытти ҫӗрте те пуҫтармалли тупӑнать. Ял урамӗсенчи ҫутӑ хунарӗсене вӑхӑтра улӑштараҫҫӗ. Вырӑнти влаҫ ҫынсемпе килӗштерсе ӗҫлет. Пӗрле пулсан тен ытти ӗҫе те тума май килӗ малашне.

**Кӑларӑма Роза ИЛЛАРИОНОВА хатӗрленӗ.**